# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

14 (7548) № * Юн кун, 2008 çулхи февралĕн (нарăс) 20-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


### Республикăра

## Ыранхи куншăн паян ĕçлетпĕр

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров республикăн Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу иртнернĕ.

Нарăс уйăхĕн14-мĕшĕнче республика пуçлăхĕ Патшалăх Канашĕнче «Малашлăхшăн паян ĕçлетпĕр!» Çырупа тухса калаçнă. Президент Правительство членĕсене Çырăва пурнăçлассипе çыхăннă мероприятисен календарлă план-графикне Министрсен Кабинечĕн тепĕр ларăвĕнче пăхса тухмашкăн хатĕрлесе çитерсе пама хушнă. «Ĕç калăпăшĕ ӳссех пырать, пирĕн вĕсене кĕске вăхăтрах нумайрах тата лайăхрах тумалла», - палăртнă Николай Федоров.

## Пĕрле эпир вăйлăрах

Тунти кунхи канашлура Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкара пĕрлештерес ыйтăва та çĕкленĕ. Хальхи вăхăтра муниципалитетсенче ăнлантару ĕçĕсем ирттереççĕ.

Çĕнĕ Шупашкар - республикăри чи çамрăк хула. Унăн историне пурте пĕлеççĕ. Вăл Атăл шывĕ çинче ГЭС тунипе çыхăннă. Кунтах хими завочĕ те çĕкленнĕ. Çапла вара Çĕнĕ Шупашкар энергетиксемпе химиксен хули пулса тăнă.

Çĕнĕ Шупашкара тата хула-спутник тетчĕç. Малтанхи çулсенче те вăл Шупашкарпа пĕрлешесси пирки калаçатчĕç. Çак сăмах чăнлăха çаврăнасси нумай юлмарĕ. Мартăн 2-мĕшĕнче Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче пурăнакансем референдумра çак хуласене пĕрлештересси пирки сасăлаççĕ.

Пысăк хуласене аталанма федераци шайĕнчен ытларах пулăшни паян вăртăнлăх мар. Уйрăм инвесторсем те халăх йышлă пурăнакан вырăна укçа хывма тăрăшаççĕ. Хулан та комплекслă аталанма майсем ытларах пулаççĕ.

### Тĕнче чемпионатĕнче

## Медальсĕр пулин те, тава тивĕçлĕ

Пирĕн ентеш Татьяна Моисеева биатлон енĕпе тĕнче чемпионатне хутшăнчĕ. Хĕрарăмсем хушшинче 4х6 километрлă эстафетăра ăмăртса медаль те илме пултаратчĕ.

Анчах пирĕн çĕршыв командишĕн иккĕмĕш тапхăрта (Светлана Слепцова хыççăн) чупакан Альбина Ахатован винтовки çĕмĕрĕлни чăрмав кӳчĕ. Команда 16-мĕш вырăна юлчĕ. Пирĕн Таня виççĕмĕш тапхăрта старта14-мĕш тухрĕ. Анчах вăл çухалса каймарĕ. Тăваттăмĕш тапхăрта чупнă Екатерина Юрьевана финиша тăваттăмĕш çитме май пачĕ. Темиçе çеккунт çеç выляса ярса пирĕн спортсменсем медальсĕр юлчĕç.

Малашнехи стартсенче Татьянăна ăнăçусем сунатпăр!



*Сăн ӳкерчĕкре эсир Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри сĕт-çу ферминчи Надежда Евгеньевна Журавлева тата Фаина Юрьевна Антонова дояркăсене куратăр. Хастар ĕçченсем иртнĕ çул хăйсене çирĕплетсе панă кашни ĕне пуçне вăтамран 5019 килограмм сĕт суса илнĕ. Вĕсем район администрацийĕн тата агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн дипломĕсемпе укçан парнесене тивĕçнĕ.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

### Çĕршывра

## В. Путин çĕршыв малашлăхне курать

***Нарăсăн 8-мĕшĕнче РФ Патшалăх Канашĕн аслă ларăвĕнче Раççей Президенчĕ хăй çĕршыв пуçĕнче тăнă сакăр çула пĕтĕмлетсе тухса калаçнă. Владимир Путин çĕршывăн ĕнерхи тапхăрĕпе тата паянхи ĕç-хĕлĕпе паллаштарнă. Тухса каланин тĕп шăнăрĕ – Владимир Владимирович Раççей малашлăхне 2020 çулччен мĕнле курни. Уйрăммăн акă вăл мĕн каланă.***

**ХАЛĂХ ПУЛĂШĂВНЕ ТУЙСА ТĂНĂРАН**

Сакăр çул каялла çĕршывра ларутăру питĕ йывăрччĕ. Дефолт çынсен перекечĕсене «çисе янă», террористсем граждан вăрçи пуçарчĕç, пурăнмалли çуртсене сирпĕтрĕç. Анчах халăха хăратаймарĕç. Раççее хӳтĕлеме, унăн пĕрлĕхне упраса хăварма çар çыннисем кăна мар, пĕтĕм общество кар! тăчĕ. Çак пулăшăва эпĕ ялан курса-туйса тăнă, унсăрăн нимех те тăвайман пулăттăм...

**АРКАНАС ХĂРУШЛĂХ ИРТРĔ**

Тулаш вăйсен витĕмĕпе çĕршыври сепаратистсем Раççей вăй-хăватне чакарас, тен, салатса ярас тĕлĕшпе хăйсен киревсĕр ĕçĕсене пурнăçлама тăрăшрĕç. Ичкерипе Дагестан халăхĕсен хăй тĕллĕн пуçтарăннă конгресĕнче Хура тинĕсрен пуçласа Каспи тинĕсĕ таран Халифат йĕркелесшĕн çунчĕç. Анчах вĕсен сĕмсĕр ĕмĕчĕ путланчĕ. Çавăн пекех Раççей субъекчĕсен хушшине территори тĕлĕшĕнчен савăл çапса кĕртме хăтланчĕç. Чăнах та, ун пек тавлашуллă территорисем пирĕн 2 пин ытла. Енчен те эпир хамăра çак тавлашăва туртса кĕме ирĕк парсан, вăл вăрах пырĕ тата юлашкинчен çĕршыва пайланса кайма «пулăшĕ». Çурçĕр Кавказри вăрçа, çĕршыв пайланассине чарма пултартăмăр. Сепаратизм каялла чакрĕ, терроризмăн хăвачĕ сĕвĕрĕлчĕ. Чечен Республики Раççей Федерацийĕн тулли правallă субъекчĕ пулса тăчĕ.

**ПУРНĂÇ ШАЙĔ ТАТА ПАРĂМСЕМ**

90-мĕш çулсенче çухатнă социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн шайне унччченхипе танлаштарма пултартăмăр. Пĕлтĕр шалти пĕтĕмĕшле продукт шайĕ (ВВП) юлашки çичĕ çулпа танлаштарсан 8,1 процент ӳсрĕ. 2007 çулхи кăтартусемпе Раççей Италипе Франциren те иртсе кайрĕ, тĕнчери чи вăйлă çĕршывсен шутне кĕчĕ. Патшалăхăн тулашри парăмĕ ВВПн виçĕ процентчĕ чухлĕ чакрĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

### Ĕçре маттуррисене – мухтав!

## Выльăх-чĕрлĕх пăхакансене чыслаççĕ

Ĕçĕ çăмăл мар выльăх-чĕрлĕх пăхакансен. Апла пулин те вĕсем йывăрлăхсене парăнтарса ăнăçу çулĕпе малалла утаççĕ.

2007 çул итогĕсемпе кашни 100 гектар çĕр пуçне 120,3 центнер аш-какай, 686,9 центнер сĕт туса илсе, кашни ĕнерен 5035 килограмм сĕт суса, сыснасене талăксерен 375 грамм, măйракаллă шултра выльăхсене 654 грамм ӳт хуштарса «Герой» хуçалăх çĕнтерчĕ.

«Герой» хуçалăхри Ольга Витальевна Петрова кашни ĕнерен 5764 килограмм сĕт суса (100 ĕнерен 100 пăру илнĕ) районта чи лайăххи пулса тăчĕ.

Пĕтĕмпе районти 62 доярка кашни ĕнерен 4 пин килограмм ытла сĕт суса илнĕ.

Паян район администрацийĕнче ĕçре маттур выльăх-чĕрлĕх пăхакансене чыслаççĕ.

### Информаци кунĕ

## Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Паян республикăра пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн темисем – ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров Патшалăх Канашне янă «Малашлăхшăн паян ĕçлетпĕр» Çырăвĕ, мартăн 2-мĕшĕ - РФ Президенчĕн суйлавĕ, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисене пĕрлештересси – стратегилле задача.

Информаци ушкăнĕсем ку хутĕнче Муркаш, Уйкас Янасал, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенчи ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ. Асăннă ыйтусемпе калаçу пуçарнисĕр пуçне вĕсен тĕрлĕ ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.

### Республика Президенчĕн Çырăвне сӳтсе яватпăр

## Миллиарчĕ те, сывлăхĕ те хамăрах кирлĕ

Президентăмăр Çырăвне хваттере хаçат илсе çитерчĕ. Тĕплĕ тишкертĕм ăна. Çакă куç умне пулчĕ. Çыру илемлĕ литература хайлавĕ мар, унта сăнарлă та ытарлă каланă е евĕрлев сăмахĕсем çук. Пурпĕрех Çырăва малти сăмахран пуçласа вĕçне çитиех пĕр сывлавпа вуласа тухрăм, тулли кăмăл-туйăмне ас тиврĕм. Çыру питĕ кăмăла кайрĕ тени ним те каламан пекех туйăннăран Президентăмăр каланисем çинче анлăрах чарăнса тăрас шухăш пуça пырса кĕчĕ. Çырура çапла туса тĕплĕ шухăшламалли вырăнсем çинеçинех тĕл пулаççĕ. Вĕсем пурте интереслĕ, хамăр пурнăçпа çыхăннă. Эпĕ вара, врач пулнăран, сывлăх сыхлавĕн ыйтăвĕсен аварне путрăм. Ку вăл капашсăр пысăк ыйту. Çырура ăна паянхи кун анлăшĕпе çĕнетсе çĕнĕ хăт кĕртме пуçăннине кăтартнă. Çак тĕллевпе халăх валли спорт керменĕсемпе стадионĕсем, çулталăкĕпех пăр çинче конькипе ярăнмалли лаптăксем т. ыт. те пулĕç. Пăр тапраннă ĕнтĕ. Муркашра, акă, спорт керменĕ кĕç-вĕç хута кайĕ, кунтах ял çыннисем валли кану вырăнĕ уçăлĕ. Çакăнтан пуçланмасть-им-ха халăхăмăр сывлăхĕ? Хирĕçле хурав çук. Анчах çав вăхăтрах сывлăха хавшатакан пулăмсем те обществăра пайтах пулни пирки те манар мар. Çĕршывĕпе вун-вун пин çамрăк (вĕсем хушшинче хĕрсем те – пулас амăшĕсем – пур) цивилизациллĕ çĕршывсенче хисепрен тухса пыракан иртнĕ ĕмĕрĕн сиенлĕ йăлисем хыççăн кайса табак туртса хăйсен тата тавраri çынсен сывлăхне сиен кӳреççĕ. Çапла каланă Çырура. Чăн та, хальлĕхе хулара та, ялта та пирус-чикаркkă тĕтĕмне хăйсен ӳпки витĕр сăвăрса кăларакансене чылай куратăн: ĕçре те, урамра та, автостанцисемпе канмалли вырăнсенче те, харпăр-хăй килĕ-çурчĕсенче те. Çав вăхăтрах пирус туртнă чух асăрханусăр пулнипе вăй илнĕ пушарсенче çĕршер-миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕл пулса çилпе вĕçет, ирĕке кайнă çулăмра çынсен пурнăçĕ татăлать. Куратпăр ĕнтĕ, сиенлĕ йăла кун йĕркине хуйхă кăна илсе кĕрет.

Çырура пĕлтернĕ тăрăх Раççейре кашни виççĕмĕш çын пирус туртать. Чăваш Ене илес пулсан, пирус туртассипе пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк пирĕн ентешсем çемье бюджетĕнчен кунсерен 13 миллион тенкĕ ытла, уйăхсерен 400 миллион тенкĕ, çулталăкне вара 5 миллиарда яхăн укçа-тенкĕ тăкаклание пĕлтерет. Çак укçа-тенкĕне хамăр çĕршывăмăрпа пурнăç условийĕсене пуянлатма-лайăхлатма ярсан пирĕн аталану чылай малалла кайнă пулĕччĕ.

«5 миллиард тенкĕне куç умне кăларар-ха, – тенĕ çырура. – Шăпах çавăн чухлĕ пурлăха çилпе вĕçтереççĕ. Пирус туртакансем хăйсен сывлăхне кăна мар, туртман çынсене те наркăмăшласа чире яраççĕ. Вĕсене сиплеме çемье бюджетĕнчен те, патшалăх кассинчен те миллиардшар тенкĕ укçа тăккалама тивет».

Пирус туртни çивĕч ыйтусен шутне кĕни Çырура аван курăнать. Çĕршывра нумай вăхăт хушши ун çине çителĕклĕ сивлесе пăхман, мĕншĕн тесен пирус туртакансем пурнăçшăн хăрушлăх шутне кĕмен. Çав вăхăтрах тĕнчери тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх пирус çыншăн чăн-чăн сиен, ăна пула тĕрлĕ чирсем пуçланаççĕ тата вăй илеççĕ.

Пирус туртнин пĕтĕмĕшле сиенне пирĕн ученăйсем те ăнланаççĕ. Эпĕ хам та сăнанă ăна. Çав вăхăтрах урăхла шухăшлакансем те пур. «Ма туртма пăрахмастăн?» – тесен хирĕçле час-часах çакнашкал хурав илтетĕн: «Туртасси пирĕн хăнăху, уйрăлми туйăм пулса тăчĕ, вăй-хал çитмест унтан уйрăлма». Сиенлĕ хăнăхăва самантрах сирсе яма çăмăл мар-тăр çав. Пирус туртакансем хушшинче çак сиенлĕ йăлана чылайăшĕ 12-15 çулсенчех хăнăхнă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

### Республика Президенчĕ Н.В. Федоров ЧР Патшалăх Канашне янă Çыруран

## *Малашлăхшăн паян ĕçлетпĕр*

Хисеплĕ депутатсем, хăнасем, хаклă ентешĕмĕрсем!

Эпир сирĕнпе, çав шутра пĕтĕм халăхпа сӳтсе явса та, пĕлтĕр уйрăмах кирлĕ тĕллевсене палăртрăмăр, вĕсем республикăн Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн 2020 çулчченхи стратегине кĕчĕç. Шăпах çавăн пек майсем пĕтĕм çĕршывшăн та актуаллă пулни çинчен иртнĕ эрнере Патшалăх Канашĕн Кремльти ларăвĕнче Раççей Президенчĕ те каларĕ.

Çавна май эпир, çак аудиторине пухăннă патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăхăн органĕсемпе учрежденийĕсен, бизнес, общество организацийĕсен представителĕсем, хамăр умра тăракан задачăсене татса парассине мĕнле пурнăçлатпăр-ха? Хуравне кашнин ĕç кăтартăвĕнче тата тулашри объективлă хаклавра шырамалла. Мĕнлерех вĕсем?

Пĕлтĕр, 2006 çулти социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнчи кăтартусем енĕпе Раççейре иккĕмĕш вырăна тухнăшăн Чăваш Ен (Раççей Федерацийĕн Правительствин, Федераци Канашĕн тата Патшалăх Думин виçĕ енлĕ комиссийĕн йышăнăвĕпе) 58 миллион тенкĕ ытла премие тивĕçрĕ. Çулталăк вĕçĕнче вара бюджета пысăк пахалăхпа тытса пынăшăн Раççей Правительстви пире черетлĕ хут 70 миллион тенкĕлĕх преми уйăрса пачĕ.

Пирĕн ĕçпе вырăнта паллашма республикăна виççĕмĕш хут килсен, Владимир Путин ăнсăртран мар çĕршывра икĕ регион – Чăваш Ен тата Белгород облаçĕ – «наци проекчĕсемпе ĕçлес енĕпе лидерсем пулса тăраççĕ», – тесе пĕлтерчĕ.

Çитес виçĕ çулхи тапхăртах эпир сирĕнпе чи пысăк, Чăваш Еншĕн ним ӳстермесĕр истори пĕлтерĕшлĕ проектсене вĕçлетпĕр, çавна пула республика ытти регионсенчен хăтлăхпа, тирпей-илемпе, экологи ăнăçлăхĕпе лайăх енчен уйрăлса тăма тытăнать. Чăваш Енре пурăнакансем лайăх пĕлӳ тата кирлĕ пек воспитани илсе, ăс-хакăлпа ӳт-пӳ енчен ăнăçлă аталанса хăйсен кирлĕлĕхне туйма тата малашлăха курма пуçлаççĕ.

Раççей Федерацийĕн Патшалăх Канашĕн раштав уйăхĕн 19-мĕшĕнчи ларăвĕнче Раççей Федерацийĕн экономика аталанăвĕн тата суту-илӳ министрĕ Эльвира Набиуллина пĕтĕм çĕршывĕпе çулталăкне пур йышши çулсене вăтамран 1800 километр чухлĕ тăваççĕ тесе пĕлтерчĕ, çав вăхăтра вара Чăваш Енре иртнĕ çулта 400 километр ытла çул тунă, вĕсем халăх пурăнакан 243 вырăна çыхăнтарнă.

Халăх сывлăхне сыхласа хăварас тесе эпир ĕçмелли шыва тĕп тĕллевсен шутне кĕртрĕмĕр тата ку енĕпе калама çук пысăк ĕç туса ирттерттĕмĕр. 2008-2010 çулсенче тăвакан шыв управĕсемпе шыв пăрăхĕсене пула çак районсем (Шăмăршă, Йĕпреç, Патăрьел, Елчĕк, Вăрнар, Пăрачкав, Комсомольски тата ытти те) пахалăхлă ĕçмелли шывпа усă курма тытăнаççĕ. Çак проектăн хакĕ 4,5 миллиард тенкĕ ытла тăрать. Чăваш Енре хăйĕн халăхне шывпа тивĕçтерме çавăн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрни нихăçан та пулман.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).